# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

4 (8770) № * Юнкун, 2020 çулхи кăрлач (январь) уйăхĕн 22-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Район кунĕ – февралĕн 21-мĕшĕнче

**Муркаш районне Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн 1944 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе йĕркеленĕ.**

Кăçал тăван района йĕркеленĕренпе 76 çул çитет. Район кунĕ ячĕпе уява февралĕн 21-мĕшĕнче К. В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче ирттерме палăртаççĕ. Ăна Аслă Çĕнтерӳ 75 çул тултарнине тата Чăваш автономийĕ 100 çул тултарнине халалласçĕ.

Çакăн пек йышăну тунă ĕнер район уявне хатĕрленсе ирттерессипе ĕçлекен йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнче. Ăна комитет ертӳçи – район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ертсе пынă.

Уявра ырă йăлапа ĕçре палăрнисене чыслаççĕ. Хастар çамрăксене Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнине çирĕплетекен сертификатсем параççĕ. Кунтах тĕрлĕ выставка ĕçлĕ. Уяв, паллах, юрă-кĕвĕсĕр те иртмĕ.

Уяв 11 сехетре пуçланать.

**Хамăр инф.**

**Саламлатпăр**

## Нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн

Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцие чылайранпа Николай Семенович Яковлев ертсе пырать. Коллектив – республикăра та лайăххисен шутĕнче. Нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн **Николай Семенович Яковлева** Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2020 çулхи январĕн 17-мĕшĕнчи указĕпе «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ветеринари врачĕ» хисеплĕ ят парса чысланă.

# Çитĕнӳсемпе хăйсен çулне уçса пыраççĕ



*Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир Ильинка вăтам шкулĕнче вĕренекен хастар çамрăксене куратăр. Вĕсем иккĕшĕ те – Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнĕ вуннăмĕш класс вĕренекенĕсем: вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыраççĕ, шкул пурнăçĕнче активлăхпа палăраççĕ.*

*Олег Портнов шкулти ачасен хăй тытăмлăх органне – «Итиль» республикăна ертсе пырать. Ку вĕренӳ çулĕнче вăл пĕтĕм Раççейри шкул ачисен олимпиадин муниципалитет тапхăрĕнче те лайăх енчен палăрма пултарчĕ. Ольга Раскова вара шкулти фитнес-аэробика секцине хаваспах çӳрет, спорта çитĕнӳсем тăвать. Хĕрсен «Взлет» ушкăнĕн йышĕнче вăл ку таранччен Чăваш Енри ăмăртусенче район ятне пĕрре мар хӳтĕленĕ, призерсен йышне кĕме пултарнă.*

*Н. НИКОЛАЕВА.*
*И. КАРГИН сăн ӳкерчĕкĕ.*

**Аслă Çĕнтерӳ уявĕ умĕн**

## 500 ытла ветеран 75 пиншер тенкĕ илĕ

**Аслă Çĕнтерӳ кунĕ тĕлне вăрçă ветеранĕсем 75 пиншер тенкĕ илĕç. Кун пирки Раççей Президенчĕ Владимир Путин Санкт-Петербургра вăрçă ветеранĕсемпе йĕркеленĕ тĕл пулу вăхăтĕнче пĕлтернĕ.**

Çак укçа-тенке пани пĕр хутчен паракан пулăшу пулĕ.

«Российская газета» хăйĕн сайтĕнче пĕлтернĕ тăрăх, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисем, вăрçа хутшăннисен тăлăх упăшкисем тата арăмсем, вăрçă вăхăтĕнче концлагерьсенче пулнă ачасем (узниксем) пурте асăннă сумма тивĕçеççĕ.

Тыл ĕçченĕсене тата концлагерьте вăрçă вăхăтĕнче вăл вăхăтра 18 çултан аслăрах пулнă çынсене 50 пиншер тенкĕ пама пăхнă.

Унчченхи çулсенче асăннă категорисене кĕрекенсене 5 – 10 пин тенкĕ таран панă. Кăçалхи юбилейлă çулта çак тӳлевсем самаях пысăкланĕç.

Чăваш Ен Ĕç тата социаллă аталану министерствин информацийĕ тăрăх, республикăра 500 ытла ветеран 75 пиншер тенке тивĕçĕ, 50 пин тенке пурĕ 9,5 пин тыл ĕçченĕ илĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

**Районта**

## Орининта – студентсен десанчĕ

**Январĕн 17 – 19-мĕшĕсенче Муркаш районĕнче çамрăксен «Снежный десант РСО» акцийĕ иртрĕ. Çавна май И. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн студентсен ĕç отрячĕн штабĕнчи 9 студент Оринин вăтам шкулĕнче пулчĕ.**

Студентсен отрячĕ шкулта 5 мастер-класс ирттернĕ: «Электроника», «Компьютер графики», «Медицина пулăшăвĕн никĕсĕсем» тата историпе çыхăннисене. Кунсăр пуçне студентсем ачасене хальхи вăхăтра анлă усă куракан квадрокоптерсемпе те паллаштарнă. Шкул ачисем вĕсене ĕçлеттерсе пăхнă кăна мар, ятарлă стендсем çинче пилотсăр вĕçекен аппаратсен макечĕсене те ăсталанă.

Студентсем Оринин шкулĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 75 çул çитнине халалласа концерт кăтартнă. Ку çеç те мар, Шупашкартан килнĕ çамрăксем Орининти Çĕнтерӳ паркĕнче, шкул территорийĕнче тирпей-илем кĕртме пулăшнă.

Çакăн пек акцисене çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчи çамрăксем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 75 çул çитнине халалласа ирттереççĕ.

**Хамăр инф.**

**Ял ипотеки**

# Çурт-йĕр çавăрма – çăмăллатнă кредит



**Ял ипотекин программине пурнăçа кĕртессине республикăра пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Ялта çурт-йĕр тума тата туянма патшалăх тивĕçтерекен çăмăллăх мелĕпе çыхăннă ыйтусене шăпах ĕнтĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов муниципаллă районсен администрацийĕсен пуçлăхĕсемпе январĕн 20-мĕшĕнче ирттернĕ канашлура сӳтсе явнă.**

Министр çумĕ Татьяна Рябинина пĕлтернĕ тăрăх, республикăра программа, пĕтĕм Раççейри пекех, кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнче ĕçлеме тытăннă.

Çăмăллатнă условисемпе кредита граждансене ял территорийĕсенче (ял агломерацийĕсенче) хваттер туянма е тума параççĕ. Ял агломерацийĕ шутне ял территорийĕсем, çавăн пекех хула округне кĕмен поселоксем, рабочи поселоксем, 30 пин çынран сахалрах пурăнакан пĕчĕк хуласем кĕреççĕ. Чăваш Республикинче кун пек хуласем шутне Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Етĕрне кĕреççĕ.

Çăмăллатнă кредита 21 çултан тытăнса 64 çулччenхи граждансене параççĕ.

Çĕр участокĕпе пĕрле хатĕр çурта е хваттере уйрăм çынран та, юридици сăпатĕнчен те туянма юрать. Çавăн пекех укçа-тенкĕпе пая кĕрсе строительство ĕçĕсене хутшăнма та пулать.

Строительство ĕçĕсене подряд организацийĕпе килĕшӳ туса кăна туса ирттерме юрать. Строительство ĕçĕсен тапхăрĕ заемщика çăмăллатнă ипотека кредитне панăранпа 24 уйăхран ытла пулмалла мар.

Кредита граждансене 0,1 процентран тытăнса 3 процент таран ставкăпа параççĕ. Чи нумайи – 25 çуллăха. Кредитăн чи пысăк сумми 3 млн тенкĕ таран пулма пултарать. Заемщик тăвакан е туянакан пурăнмалли çурт-йĕрĕн 10 е ытларах процентне тӳрех тӳлет.

Канашлу ĕçне «Россельхозбанк» представителĕсем хутшăннă. Вĕсем çăмăллатнă ял ипотекин программине пурнăçа кĕртме хатĕр пулнине, кредит илме заемщиксенчен заявкăсем йышăнма тытăннине пĕлтернĕ. Харпăр хăй страховани тунă чухне «Россельхозбанк» сĕнекен ставка 2,7 процентран ытла пулмасть.

Банк кредита дифференциллĕ е аннуитетлă тӳлевсемпе парсa татма май парать. Юлнă ссуда парăмĕн юлашкийĕ уншăн ӳсмест. Клиент кредита тӳлесе татма пуртарасlăха палăртнă чухне тĕрлĕ тупăш мелне, вăл шутра килти хушма хуçалăха тытнине те шута илме пăхнă.

**Республика Ял хуçалăх министерстви.**

### Саламлатпăр

Пирĕн хаклăран та хаклă, хисеплĕрен те хисеплĕ, юратнă аннепе аттене, асаннепе асаттене – Муркашра пурăнакан **Альбина Варсонофьевнăпа Петр Васильевич КРАСНОВСЕНЕ** çемье çавăрни 50 çул çитнĕ ятпа – ылтăн туй ячĕпе – ăшшăн саламлатпăр. Эсир – пирĕн пурнăç илемĕ, нимĕнпе виçейми пуянлăх, эсир пуррипе пирĕн кун-çул хаваслă та телейлĕ. Тавах сире пире юратса çитĕнтернĕшĕн, пурнăçăн анлă çулĕ çине çирĕппĕн тăратнăшăн. Кил-йыш вучахĕн ăшшине тытса пыма çăлкуç шывĕ пек тапса тăракан хавхалану, çут тĕнче илемĕпе киленсе пурăнма çирĕп сывлăх, вăй-хал, телей сунатпăр. Нумай çул пире савăнтарса пурăнма Турри вăрăм ĕмĕр пиллетĕр сире, ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах, пире пурнăç пилленĕ аттепе аннене.



**Ăшă салампа: хĕрĕсем Алинăпа Наташа çемйисемпе.**

Хаклă мăшăра, аттене, асаттене, пиччене – Платкасси ялĕнче пурăнакан **Николай Иванович МИХАЙЛОВА** 65 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр. Мăшăрпа юратса, ачасемпе, мăнуксемпе, сывăх тăвансемпе ĕмĕр вĕçне çитиччен килĕштерсе пурăнмалла пултăр.



**Салампа: мăшăрĕ, ачисем, кинĕ, кĕрÿшĕсем, мăнукĕсем, сывăх тăванĕсем.**



Юратнă мăшăра, шăллăма, кĕрĕве, асаттене – Анаткас Апаш ялĕнче пурăнакан **Николай Иванович АНДРЕЕВА** сумлă юбилей ячĕпе саламлатпăр, çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, пысăк çемьере килĕшÿпе юрату, телей сунатпăр. Турри сана пулăшса, вăй-хăват парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр. Эпир сана юрататпăр, тав сăмахĕ калатпăр, татах та нумай çул пурăнма сунатпăр.

Шкул пĕтернĕ хыççăн вăл Шупашкарта 18-мĕш номерлĕ профтехучилищĕре экскаваторщик специальноçне алла илчĕ. Ун хыççăн çар ретне тăчĕ, унтан Германире те пулма ĕлкĕрчĕ. Хамăр çĕршыва таврăнсан экскаваторщикра тĕрлĕ стройкăра ĕçлерĕ, çул-йĕр тунă çĕрте чылай тăрăшрĕ. Кирек епле ĕçе те тÿрĕ чунпа пурнăçлатчĕ, çынсене ялан пулăшма хатĕрччĕ. 50 çул тултарсан чирпе хавшарĕ пулин те, килте вăй-хăват çитнĕ таран хăш-пĕр ĕçе тума тăрăшать, мăнукĕсемпе выляма та кăмăл тупать.

**Салампа: мăшăрĕ, аппăшĕн тата йăмăкĕн пысăк çемйисем, хĕрĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, сывăх тăванĕсем, ял-йыш.**

### РФ Президенчĕн Çырăвне сÿтсе яватпăр

# Пирĕн пурин те пĕрле ĕçлемелле

***Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ – капиталлă строительствăпа общество инфраструктурине аталантарассин пайĕн пуçлăхĕ Алексей МАТРОСОВ:***



– Ман шутпа, Раççей Президенчĕн кăçалхи Çырăвĕ – пирĕн çĕршывра çывăх малашлăхра пулса иртмелли ырă улшăнусен программи. Чи пĕлтерĕшли – ума лартнă задачăсем пурте Раççейре пурăнакансен пурнăçне лайăхлатма тивĕç. Патшалăх Пуçлăхĕ палăртнă задачăсем çĕршывра демографи лару-тăрăвне малалла та ырă енне улăштарса пырассипе çыхăннă.

В. Путин хăйĕн Çырăвĕнче çамрăк специалистсене хăйсем çуралса ÿснĕ вырăнсене таврăнса ĕçлеме, пурăнма майсем тумалли мерăсем çинче те чарăнса тăчĕ. Ку енĕпе çĕршывра сахал мар ĕç пурнăçланать. Пирĕн района илес пулсан та, çынсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатассипе, çул-йĕр тăвассипе тĕрлĕ программăна пурнăçа кĕртсе пыратпăр.

В. Путин экологи ыйтăвĕсене те хускатрĕ. Пысăк компанисене хăйсен социаллă тата экологи ответлăхĕ пирки асăрхаттарса каларĕ. Атмосферăна сиенлĕ хутăшсем кăларассине сахаллатмалли мерăсене палăртрĕ. Пирĕн районта тавралăха тирпейлесе хăт кĕртесси çине пысăк тимлĕх уйăрнипе пĕрлех эпир ялсенчен çÿп-çап турттарса тухасси çине те пысăк тимлĕх уйăратпăр. Планра – йăлари хытă çÿп-çап валли полигонăн иккĕмĕш черетне туса хута ярасси.

Район кунран-кун тасарах та тирпейлĕрех, çынсене кунта пурăнма хăтлăрах пултăр тесе эпир малашне те хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех тума тăрăшăпăр.

***Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – йĕркелÿпе кадрсен, право тивĕçтерĕвĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Лилия ТАРАСОВА:***



– Президент çĕршыври кашни çынна пырса тивекен темăна – çемье институчĕн темине – пысăк тимлĕх уйăрчĕ. Вăл çĕршыври пĕчĕк тупăшлă çемьесен 70 – 80 проценчĕ таранах ачаллă çемьесем пулнине палăртрĕ. Çакăн пек çемьесен тупăшне пысăклатмалли мерăсем çинчен пĕлтерчĕ. Çавăнпа та ашшĕ-амăшĕсем президент Çырăвне ырласах итлерĕç, йышăнăвĕç пулĕ тесе шутлатăп.

Вĕренÿ тата сывлăх сыхлав системисенче те лайăх улшăнусем пулмалла. Кунпа пĕрлех В. Путин 2012 çулти «май указĕсене» пурнăçласинче ĕç укçи тĕлĕшпе палăртнă параметрсене пăхăнса пымаллине те асăрхаттарса хăварчĕ.

РФ Конституцине улшăнусем кĕртмелли пирки калана май, президент çынсене пенси тивĕçлĕ шайра парса тăрассине те тĕп саккунра çирĕплетсе хăвармаллине палăртрĕ.

Муниципалитет влаçне президент халăха чи çывăх влаç тесе каларĕ. Çавăн пекех халăх улшăнусем кĕтнине тата çав улшăнусене пурнăçа кĕртессинче халăх хăй те хутшăнма хатĕррине пĕлтерчĕ. Çапла каланипе килĕшмесĕр çук. Çавăнпа та кирек епле ыйтăва татса парассинче те пирĕн пурин те пĕрле ĕçлемелле.

***Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – финанс пайĕн пуçлăхĕ Рената АНАНЬЕВА:***



– Çĕршыв президенчĕ кăçалхи Çырура Раççей обществин пурнăçĕнчи çивĕч ыйтăвĕсем пирки каларĕ, вĕсене татса памалли çул-йĕре, çĕршыв аталанăвĕн çак çулталăкри тĕп енĕсене палăртрĕ.

Çыру никĕсĕнче социаллă пурнăçпа экономика тематики пулчĕ. В. Путин палăртнă тăрăх, çак тĕлĕшри ырă улшăнусене пурнăçа кĕртме пысăк ресурссем кирлĕ, федераци бюджетне те улшăнусем кĕртме тивет. Çак ĕçе президент май пур таран хăвăрт та тимлĕ пурнăçламаллине каларĕ. Регионсен те хăйсен норматив ĕçĕсене шайлаштарса пурнăçламалла пулать. Çапла вара – район шайĕнче те.

Çырура палăртнă задачăсене эпир те хамăр енчен пăтăрмахсемсĕр пурнăçлама тăрăшатпăр.

**Л. ПАВЛОВА хатĕрленĕ.**

### Çул çитменнисен ыйтăвĕсемпе

# Ырă тĕслĕх те, çирĕп сăмах та кирлĕ

**Çул çитменнисен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хÿтĕлекен районти комиссин кăçалхи пĕрремĕш ларăвне администрацивлă йĕркене пăснă ултă çынна чĕнчĕç. Ларăва вĕсенчен пĕри кăна – чылай вăхăт ачисене пăхман, вĕсене пăрахса хăварса çÿренĕ хĕрарăм килчĕ.**

Катькас ял тăрăхĕнче пурăнаканскер – икĕ пĕчĕк ача амăшĕ. Шкул çулне çитмен ачисем çав вăхăтра эрни-эрнипех килĕнче аслашшĕ-асламăшĕпе пурăннă. Хĕрарăм ăçта пурăннипе кăсăкланчĕç комисси членĕсем. Вăл вара вăхăта ăçта ирттернине пĕлтерме кăмăл тумарĕ. Сăмаха хăй халĕ ĕçлени çине куçарса ячĕ. «Частник патĕнче ĕçлетĕп. Укçине тÿлет», – терĕ çеç.

Ларăва килмен ытти ашшĕ-амăшĕ тĕлĕшпе пухнă материалсем те ачисене кирлĕ пек пăхса тăманнипе çыхăннă. Çемйисем тĕрлĕрен, сăлтавĕ пĕрре – эрех ĕçнинче. Çапла асăннă ял тăрăхĕнчи тепĕр çемьери ачана, килте çимелли пулманран тата условисем япăхнăран, хĕллехи каникул вăхăтĕнче Муркаш районти тĕп больницине вырнаçтарма тивнĕ. Унăн амăшне маларах эрех ĕçессинчен асăрхаттаракан сиплеве явăçтарнă, анчах Çĕнĕ çул уявĕ умĕн хĕрарăм хăйне чарайман – алла каллех эрех черкки тытнă. Ачана ашшĕне пама ирĕк пулман – вăл ашшĕ пулнине çирĕплетекен документсем çук иккен. Юрать ача амăшĕ тепĕр хут сиплеве кайма килĕшнĕ. Район комиссине тивĕçлĕ справкăсем тăратнă хыççăн ачана амăшне таварса панă.

– Анчах та эпир çак çемьене учета илнĕ, çавăнпа та унти лару-тăрăва малашне контрольлесе тăрăпăр, – çапла пĕтĕмлетрĕ хĕрарăм тĕлĕшпе тунă йышăнăва комисси ĕçне йĕркелесе пыракан сектор ертÿçи Александр Данилов.

Ярославка ял тăрăхĕнчи пĕр çемьере те «асар-писерĕ» эрех ĕçнинчен пуçланнă. Ашшĕпе пурăнакан ачасен Çĕнĕ çул уявĕ умĕн кăмăлĕ самаях пăсăлнă. Унччен чиперех пурăннă-ха: кил картиш тулли кайăк-кĕшĕк тытаканскер, арçын ачисене йĕркеллĕ апатлантарнă, пăхса тăнă, таса, тирпейлĕ çÿретнĕ. Çĕнĕ çул уявне те çемьере хаваспах хатĕрленнĕ: ашшĕ пепкисене кучченеç те, хаклă парнесем те туянса панă. Анчах куç тĕлне пулнă хĕрлĕ эрех бокалне çавăрса хунă хыççăн арçын урăлмасăр ĕçме пуçланă. Хальлĕхе хăйсем тĕллĕн апат пĕçерсе çиме пултарайман ачасен уяв кунĕсенче пылак çимĕçпе пурăнма тивнĕ. Ку вăхăта ĕçме чарăннă арçынна наркодиспансера сиплеве яма сĕнÿ пулчĕ ларура. Унсăрăн ачисене малашне йĕркеллĕ пăхса тăрасси комисси членĕсене иккĕлентерет.

Çапла йывăр лару-тăрăва лекнĕ çемьесене, чи малтанах çул çитмен ачасен прависемпе интересĕсене хÿтĕлесе тĕллевпе, комисси саккунлă тĕрлĕ майпа пулăшма тăрăшать. Комисси ларăвĕсене чĕннĕ ашшĕ-амăшĕсемпе те, ачасемпе те тĕрлĕ сферăра вăй хуракан специалистсем ăнлантару, асăрхаттару калаçăвĕ сахал мар ирттерессĕ, тăтăшах килĕсене çитсе килессĕ. Анчах та, комисси членĕсем калана тăрăх, ача преступлени тунă пулсан та, йĕркене пăснă пулсан та, юлашки çулсенче ашшĕ-амăшĕ ачишĕн ытлашшипех хута кĕни палăрать. Ачан ашшĕ-амăшĕ ăна кирек мĕнле лару-тăрура та юратнине, ăнланнине пĕлмелле, туймалла – çакна никам та хирĕç мар. Çапах та ашшĕ-амăшĕн çирĕп сăмахĕ те пулмалла, ырă тĕслĕхĕ те кирлĕ. Унсăрăн ачасем хулиганла ĕçсем тума та, ют пурлăха вăрлама та пултарассĕ. Акă иртнĕ ларăва та хулара хулиганла ĕçсем тунă Муркаш район ачине чĕннĕ. Вăл вара, районти çул çитменнисен подразделенийĕн ертÿçи Олег Яковлев пĕлтернĕ тăрăх, унччен пĕрре мар обществăлла вырăнта ÿсĕр пулнипе «чапа» тухнă. Ачана, шута хумалли сăлтава пула, профессин вăтам пĕлĕвне паракан вĕренÿ заведенийĕнчен те кăларса янă иккен. Йăлтах вăхăтра тимлĕх, çирĕп сăмах çитменнипе.

Пĕлтĕр комисси хăйĕн ларăвĕсенче ачасем тĕлĕшпе пуçарнă администрацивлă материалсене сахал мар тишкернĕ. Вун виçĕ ачана учета илнĕ. Учетран кăларни вара ытларах чухне ача 18 çул тултарнăран пулнă.

Ларура иртнĕ çул республикăри çемьесенче ачасемпе пулса тухнă инкексене тишкерчĕç. Çавна май ларăва ертсе пынă комисси председателĕн çумĕ – депутатсен район Пухăвĕн депутачĕ Александр Сидюшкин ку тĕлĕшпе комисси членĕсен профилактика ĕçне малашне те тĕллевлĕ пурнăçламаллине асăрхаттарса каларĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Черетре – çур аки

# Хамăр патăмăрти вăрлăхпа ĕçлер

**Кăрлачăн 14-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министрĕн пĕрремĕш заместителĕ Джамбулат Хатуов регионсенчи аграри ведомствисен ертӳçисемпе селектор канашлăвĕ ирттерчĕ. Калаçу çывхаракан çур аки пирки тата акара хамăр çĕршывра туса кăларнă, вырăнти вăрлăхпа ытларах усă курасси çинчен пулчĕ.**

Унта хутшăннă хыççăн Чăваш Республикин Ял хуçалăх министрĕн заместителĕ Сергей Лисицын республикăри ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем ака вăрлăхне 48,5 пин тонна (мĕн кирлин 99 процентĕ) хывса хăварни пирки пĕлтерчĕ.

Пирĕн районти пĕрлешӳллĕ кооперативсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем çывхаракан çур акире акма палăртнă вăрлăха кăçал çителĕклĕ янтăланă. Вăтам шайпа пăхсан, паян унăн 59,2 проценчĕ ака кондицине тивĕçтерет. Кунта çакна та палăртса хăварас килет, пирĕн хуçалăхсем хамăр çĕршывра туса илнĕ вăрлăхпа çеç усă кураççĕ. Паянхи куна вăрлăхăн пĕр проценчĕ – оригинал вăрлăхĕ, 5 проценчĕ – элита, 1 – 4 репродукцилли – 68 процент, сорта тивĕçтерменни – 27 процента яхăн. Çур аки çитиччен сорта тивĕçтерменнине паха вăрлăхпа ылмаштарма тăрăшмалла. Çакна валли республикăра вăрлăх туса илекен хуçалăхсем пур. Унти лару-тăрупа «Россельхозцентр» сайтĕнче паллашма пулать. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, республикăра элита вăрлăх хатĕрлекен хуçалăхсенче сутмалли паха вăрлăх сахалланса пырать. Çавăнпа та ку ĕçрен никамăн та çывăрса юлас марччĕ, патшалăх пулăшăвĕпе туллин усă курса çĕнĕ вăрлăх ытлă-çитлĕ туянса юлма тăрăшасчĕ. Элита вăрлăх туянакансене патшалăх 80 процентран кая мар субсиди парать. Кунпа пĕрлех паха вăрлăх тухăçа ӳстерет, ытларах тупăш парать, укçа-тенкĕ перекетлеме пулăшать. Çакна ăнланса хуçалăхсем янтăланă вăрлăха ака кондицине çитерессипе ĕçленĕ хушăрах, вăхăт çур хĕлтен иртнĕ май, çĕнĕ вăрлăх туянасси пирки те манмалли çук. Ку ĕç валли патшалăх уйăракан пулăшупа хальтерех усă курса юлни вырăнлă пулмалла. Паянхи куна çак ĕçе пурнăçа кĕртсе В. Бархаткинпа И. Скворцов хресчен (фермер) хуçалăхĕсем çеç 4-шар тонна элита вика вăрлăхĕ туянчĕç.

Иртнĕ вырмарах тăрăшса ĕçленĕрен тата хуçалăхсем тырă-пулăна вăхăтра пухса кĕртнĕрен тĕрĕслевсенче шăтман вăрлăх 600 центнер çеç пулни палăрчĕ. Ку вăл – «Оринино» тата «Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕсенчи урпа. Çакна пăхмасăрах, хатĕрленĕ вăрлăхăн 38 проценчĕ (7405 центнер) хальлĕхе çум курăк вăррисемпе ака кондицине тивĕçтерейместь. Çак ĕçе юлашки куна хăварсан, вăхăт çитнĕ май уй-хире паха вăрлăхпа шуратасси иккĕленӳллĕ пулса тухма пултарать. Çакна ăнланса янтăланă вăрлăха аласа ака кондицине çитерессипе пур хуçалăхра та çывăх вăхăтра çанă тавăрсах ĕçе кӳлĕнессе шанатăп.

Пĕрлешӳллĕ кооперативсемпе агрофирмăсен тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсен пĕрлехи ĕçĕ аяларах илсе кăтартнă таблицăран аван курăнать. Танлаштарма, иртнĕ çул çак вăхăта ака кондицине тивĕçтерекен вăрлăх районĕпе 78 процент пулнă пулсан, кăçал хуçалăхсен ку ыйтупа çине тăрса ĕçлемелли курăнать.

Тырă-пулă вăрлăхне Чăваш Республикин тулашĕнчен илсе килес пулсан, ăна тăхтаса тăмасăр пирĕн патăмăрта тĕрĕслеттермелле. Çакă хуçалăха та, района та карантинлă çум курăкĕсемпе ӳсен-тăран сăтăрçисене илсе кĕресрен туллин сыхлама май парĕ.

Çур аки валли тĕштырăпа çĕр улмин уйрăмах паха сорчĕсене туянсан, вĕсене 2 çул çеç туса илсе тавар çаврăнăшĕнче усă курма юрать. Ытларах усă курас тĕллев пулсан, вĕсене туяннă чухне хуçалăхсен вăрлăх туса илекенпе çийĕнчех лицензи килĕшĕвĕ тума манмалли çук. Çак йĕркене нумайăшĕ пĕлеççĕ тата çирĕп тытса пыма тăрăшаççĕ пулин те, районти хуçалăхсенче сорта тивĕçтермен вăрлăх 27 процент пулни хытах шухăшлаттарать.

Манмалли çук, Тăван çĕршывра усă курма ирĕк панă сортсен патшалăх реестрĕ пур. Вăрлăх пирки калакан РФ саккунĕпе акара усă куракан кашни сорт çав реестрта пулмалла.

Тепĕр çĕнĕлĕх пирки те каласа хăваратăп. Сăмах – çĕр пахалăхне ӳстересси пирки. Пĕлтĕртен пуçласа, тĕслĕхрен, çĕре извеçленĕшĕн хуçалăхсене Раççей бюджетĕнчен 90 процент чухлĕ саплаштарма пăхнă. Иртнĕ кĕркунне çак пулăшупа пирĕн районта А. Аргандеев фермер кăна усă курса юлчĕ.

Кăçал çĕре фосфор çăнăхĕ хывнă чухнехи тăкаксемшĕн те тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсене Чăваш Республикин бюджетĕнчен 80 процент саплаштарма пăхнă. Çак çăмăллăхсем пирĕн çĕр ĕçченне пысăк тĕкĕ пуласса, вĕсемпе хуçалăхсем ытлă-çитлĕ усă курасса эпĕ шанатăп.

Йывăрлăхсене çĕнсе, малашлăха пăхса вăй хуракансем вăрлăх хатĕрлес, минераллă удобрени туянас, çĕр пахалăхне ӳстерес ыйтусенчи йĕркене çирĕп пăхăнса ĕçлĕç тесе шутлатăп.

**А. ПАВЛОВ,**
**«Россельхозцентр»**
**Чăваш Республикинчи**
**филиалăн районти пайĕн пуçлăхĕ.**

**Районти пĕрлешӳллĕ тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче çуртри вăрлăхĕн пахалăхĕ мĕнле пулнине кăтартни (кăрлач уйăхĕн 20-мĕшĕ тĕлне).**

| Хуçалăхсем | Вăрлăх кирлĕ | Тĕрĕслеттернĕ (ц) | Кондицилле вăрлăх (%) | Кондицие ларман вăрлăх (ц) | Çум курăк вăррисемли (ц) | Шăтаслăхпа (ц) |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 1200 | 1200 | 50 | 600 | 600 | 0 |
| «Герой» | 1100 | 1850 | 0 | 1850 | 1850 | 0 |
| «Путь Ильича» | 1510 | 1950 | 31 | 1350 | 1200 | 0 |
| «Оринино» | 600 | 500 | 0 | 500 | 200 | 300 |
| «Свобода» | 1410 | 1400 | 100 | 0 | 0 | 0 |
| Суворов яч. хис. | 1900 | 3900 | 100 | 0 | 0 | 0 |
| «Ударник» | 2900 | 1725 | 0 | 1725 | 1725 | 300 |
| Чкалов яч. хис. | 1200 | 1200 | 1200 | 0 | 0 | 0 |
| ООО «Гея» | 500 | 900 | 78 | 200 | 200 | 0 |
| «КМК-Агро» | 0 | 200 | 100 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Пихтеров А. Н. | 800 | 1630 | 74 | 430 | 430 | 0 |
| КФХ Бархаткин В. В. | 1010 | 1200 | 25 | 900 | 900 | 0 |
| КФХ Трепнев А. А. | 1100 | 975 | 100 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Иванов А. Н. | 200 | 200 | 100 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Мерлов А. В. | 100 | 300 | 100 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Федоров В. А. | 100 | 300 | 0 | 300 | 300 | 0 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **19230** | **19230** | **59,2** | **7855** | **7405** | **600** |

Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул çитнĕ май

# Мăшăр тăрăшулăхпа хисепе тивĕçнĕ

**Хаçатăн маларахри номерĕнче Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул çитнĕ май, сăн ӳкерчĕксемпе аса илӳсем йышăнни пирки пĕлтернĕччĕ. Çак кунсенче хаçат редакцине Хопкĕперти Галина Иванова килчĕ, унăн аса илĕвĕ çапла пулчĕ:**

– Ĕç ĕмĕрне колхозра ирттертĕмĕр. Эпĕ 7 класс пĕтернĕ хыççăн «Волга» колхозăн сысна ферминче ĕçлеме пуçларăм, унта тăватă çул тăрăшрăм. Çурă йышлă илнĕшĕн тата çухатусемсĕр ĕçленĕшĕн мана район шайĕнче ырăпа палăртрĕç. Ун хыççăн Апчарти ĕне ферминче, «Хлебороб» колхозра ăратлă сурăхсене ĕрчетнĕ çĕрте ĕçлерĕм. Сурăх-путек йышĕ 550 пуçа та çитетчĕ, сурăх кĕтĕвĕпе ноябрьччен çӳрени те пулнă.



1963 çулхине Леонид Ивановичпа мăшăрланнă хыççăн кӳршĕри «Хлебороб» хуçалăха куçма лекрĕ, çынсемпе пĕрле уй-хир ĕçне хутшăнтăм. Мăшăр тракторист-машинистра тăрăшатчĕ. Вăл ĕçлекен ХТЗ-54 маркăллă трактор çинче унăн пулăшуçинче тимлерĕм. Пилĕк корпуслă прицеплă сухапа çĕр каçа тăхăр гектар таран сухалаттăмăрччĕ. Районта суха кăтартăвĕ пысăк пулнипе 1-мĕш вырăна тухрăмăр, мăшăра алла çыхмалли сехет парса чысларĕç. Вăл Çĕрпӳре иртнĕ сухаçăсен ăмăртăвне хутшăнма тивĕç пулчĕ.

1967 çулта сăн ӳкерчĕкне районти Хисеп хăми çине вырнаçтарни те унăн тăрăшулăхне çирĕплетет. Колхоз ĕçне куллен хутшăннисĕр пуçне çынсем ыйтнипе пĕр çулхине йăлăмран 80 рейс йывăç турттарса килчĕ. Ытти çул та çавна май ĕçлесе пычĕ.

Мăшăр комбайнпа та ĕçлерĕ, эпĕ унăн пулăшуçинче тăрăшрăм. Хамăр колхозра анчах мар, ытти çĕре те комбайнпа ĕçлеме кайса çӳрерĕ. 1988 çулхине Смоленск облаçĕнче вырмара комбайнпа тăрăшса ĕçленĕшĕн Хисеп хучĕ пачĕç, ун пекки темиçе те пулнă, ăмăртусенче сахал мар çĕнтернĕ. Пире ĕç çулĕсенче тĕрлĕ дипломпа, Тав çырăвĕпе чысласа хавхалантарчĕç.

Пурнăç çăмăлах килмерĕ пулин те, ултă ача çуратса çитĕнтертĕмĕр. Ун чухне ача çуратнă хыççăн 56 кун кану паратчĕç. Çав вăхăт çитнĕ те колхоза ĕçлеме васканă, унтан ытла ларман ачасемпе. Хуняма Степанида Андреевна пире тăтăшах пулăшса тăчĕ: ачасене пăхассипе те, хуçалăхра тăрăшассипе те. Эпир килте ирĕнкаçăн кăна пулнă, ытти чухне – колхозра. Каламалли ку анчах та мар-ха, аса илӳ сахал мар, пенси çине тухсан та алă усса ларман.

Халĕ мăшăр çук ĕнтĕ. Килте кĕçĕн хĕрĕм Ирина тăрăшать, хам та пулăшатăп. Сумалли виçĕ ĕне усратпăр, малтан унтан та ытларах пулнă, – паллаштарчĕ Галина Евдокимовна хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Аслă Çĕнтерĕве – 75 çул

# Вăрçă çулĕ вăрăм пулнă



**Сăн ӳкерчĕкре Тушкасси ялĕнчи Алексей Александров аслă лейтенанта куратăр. Уншăн Тăван çĕршывăн аслă вăрçин çулĕ питех те вăрăм та тумхахлă пулнине Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариатĕнче упранакан документсем çирĕплетеççĕ.**

А. Александров 1922 çулхи мартăн 29-мĕшĕнче Тушкассинче çуралнă, Мăн Чураш ялĕнче 10 класлă пĕлӳ илнĕ. Шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вырăнти хуçалăхра ĕçлеме тытăннă, анчах та унта чылайлăха тытăнса тăрайман.

Кĕçех Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçланнă, ял-йыш арçынсене фронта ăсатма тытăннă. 1941 çулхи февралĕн 18-мĕшĕнче Тушкасси каччи Советски çар комиссариачĕ урлă Совет çарĕн ретне тăнă, Фрунзе хулинчи 24 номерлĕ вĕçев шкулĕн курсанчĕ пулнă. А. Александров 1941 çулта 196-мĕш авиаполк тытăмĕнче Тĕп фронтра çапăçнă. Пĕр хĕрӳ çапăçура вăл йывăр сурансланнă пирки çав çулхи октябрьтен тытăнса 1942 çулхи январь уйăхĕччен Саратов хулинче госпитальте сипленнĕ.

1942 çулхи январь – 1943 çулхи май уйăхĕсенче Самарканд хулинчи Воронежри çар çыхăнăвĕн училищин курсанчĕ А. Александров радиоçыхăну командирĕн специальноçне алла илнĕ. 1943 çулхи майăн 3-мĕшĕнче Çурçĕр Ази округĕн 0307 номерлĕ хушăвĕпе ăна лейтенант званине панă. Кĕçех чăваш каччине Çурçĕр Кавказ фронтĕнче радиовзвод командирĕн должноçне çирĕплетнĕ.

1945 çулхи март – 1945 июнь уйăхĕсенче Белорусси фронтĕнче ăна радиостанци ертӳçи пулма шаннă. Аслă Çĕнтерӳ хыççăн фронта тата уйрăмсене салатса янă май, июль уйăхĕччен вĕсен çар чаçĕ резервра тăнă. 1945 çулхи августран пуçласа 1947 çулхи апрельччен Германинчи Гера хулинче округри çар комендатура управленийĕн çыхăну уйрăмĕ çумĕнчи радиостанци ертӳçинче тăрăшнă. 1947 çулхи апрелĕн 8-мĕшĕнче Германинчи Совет çар администрацийĕн тĕп ертӳçин 0265 номерлĕ хушăвĕпе А. Александрова саппаса кăларнă.

А. Александрова çапăçусенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн «Хĕрлĕ Çăлтăр» орден, «Варшавăна ирĕке кăларнăшăн», «Берлина илнĕшĕн», «Германие çĕнтернĕшĕн», «Кавказа хӳтĕленĕшĕн» медальсемпе чысланă, çавăн пекех вăл тĕрлĕ Тав çырăвне тивĕçнĕ.

Тăван тăрăха таврăнсан Советски райпотребсоюзĕнче, ял хуçалăхĕнче тата ытти çĕрте ĕçленĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Спорт

# Йĕлтĕрçĕсем çанталăка çĕнтерчĕç



**Çанталăк январь уйăхĕнче хăйне хĕллехи пек мар ăшă кăмăл-туйăмлă пулнине кăтартать. Апла пулин те, вĕтĕртетекен çумăра, хĕллехи шыв кÿлленчĕкĕсене пăхмасăрах, иртнĕ шăматкун Муркаш районĕнчи йĕлтĕрçĕсем хĕллехи пĕрремĕш ăмăртăва Калайкассине пуçтарăнчĕç. Калайкасси шкулĕ çывăхĕнчи йĕлтĕр йĕрĕ çинче юр пуррине курсан савăнса тĕлĕнчĕç. Çак шкулта вăй хуракан тренерсем те, шкул ачисем те район ăмăртăвне тăрăшса хатĕрленни курăнчĕ.**

Спортпа туслисемшĕн нимĕнле çанталăк та пăтăрмах мар. Çакна палăртса район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев хĕллехи пĕрремĕш ăмăртăва пуçтарăннисене йĕлтĕр йĕрĕ çинче ăнăçу сунчĕ.

Палăртса хăвармалла, спортпа туслă çынсем уйăх пуçламăшĕнчи спорт вунăкунлăхĕнче спортзалсене, бассейна активлă çÿрерĕç, районта иртнĕ тĕрлĕ ăмăртăва хутшăнчĕç. Апла уяври кану кунĕсене активлă ирттернĕскерсем ăмăртăва та хатĕрленмесĕрех тухман темелле.

Çакна ертÿçĕсен ăмăртăвĕнче мала тухнисем те аван кăтартса пачĕç. Клубсен централизациленĕ тытăмĕн директорĕ Игорь Смирнов, Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валерий Фомин, Муркаш район тĕп больницин тĕп врачĕ Николай Кожевников йĕлтĕр йĕрне çăмăллăнах парăнтарчĕç. Хĕрарăм-ертÿçĕсем те вĕсенчен юлмарĕç: Муркаш шкулĕн директорĕн çумĕ Эмма Филиппова, халăха ĕçпе тивĕçтерекен Муркашри центрăн ертÿçи Ираида Димитриева тата Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Марина Соколова палăрчĕç.

Шкул ачисен командисем пирки каланă чухне вара калайкассисене уйрăмах мухтамалла: çак шкул вăтам ÿсĕмри ушкăнсен йышне тÿрех виçĕ команда, аслисен ушкăнĕн йышне харăсах икĕ команда кăларма пултарнă. Апла ачасене спорта явăçтарассипе тимлесе ĕçлени те – куç умĕнчех. Москакасси шкулĕн те вăтам ÿсĕмлисен йышĕнче харăсах виçĕ команда ăмăртрĕ.

Вăтам шкулсен вăтам ÿсĕмри командисен ăмăртăвĕнче малти вырăнсене çаксем йышăнчĕç: 1-мĕш вырăн – Калайкасси шкулĕ, 2-мĕш вырăн – Муркаш шкулĕ, 3-мĕш вырăн – Калайкасси шкулĕн иккĕмĕш команди.

Çак ÿсĕмрех тĕп шкулсен командисен йышĕнче малти вырăна шетмĕпуçсем тухрĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче – шатракассисем тата тойкилтĕсем.

Аслă классенче вĕренекенсен командисем хушшинче те хĕрÿ кĕрешÿ пулчĕ. Кунта та калайкассисемшĕн савăнмалла: пĕрремĕш команди 1-мĕш вырăн, иккĕмĕш команди 2-мĕш вырăн йышăнчĕç. Çатракасси шкулĕн йĕлтĕрçисем виççĕмĕш пулчĕç.

Йĕлтĕрçĕсен пĕрремĕш ăмăртăвĕнче тĕрлĕ предприятипе организацирен пурĕ 7 команда старта тухрĕ. «Свобода» хуçалăхăн команди пьедестал çинчи чи çÿллĕ картлашка çине хăпарма пултарчĕ. Хыççăнхи вырăнсене Оринин тата Ильинка ял тăрăхĕсен командисем йышăнчĕç.

Çĕнтерÿçĕсене чысланă май, «Калайкасси» тени пĕрре мар янăрарĕ. Куртăмăр – тивĕçлипех. Çавăнпа ĕнтĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ те малалла ăнтăлас текенсене калайкассисенчен тĕслĕх илме сĕнчĕ. Кил хуçисене вара йĕлтĕр йĕрне хатĕрленĕшĕн тав турĕ: çак йĕлтĕр йĕрĕ вун-вун çынна хавас кăмăл-туйăм парнелерĕ, хĕллехи илемпе савăнтарма пултарчĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

Вулакан пултарулăхĕ

# Чыспа мул

Çут тĕнчере мĕн кирлĕ эteme?
Пуянлăх, мул е чыс ĕмĕрлеме?
Пултарайсан этем çакна пĕлме
Тар юхтарса пуçлатчĕ ĕçлеме?

Ун чух санпа мухтанĕç ачусем,
Халăх валли сан иртĕç çулусем.
Пуянлăхшăн чысна эс çухатсан,
Эс ан кÿрен этемлĕх ылхансан.

**П. ВОРОБЬЕВ.**

## КУПЛЮ / ТУЯНАТÁП

**КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ЛОШАДЕЙ, ОВЕЦ. ДОРОГО. Старых, молодых в любом состоянии и вынужденный забой. Тел. 8-961-344-03-82. Рома. 3-20.**

* * *

**КУПЛЮ БЫЧКОВ от 10 дней до 500 кг, КОРОВ, ТЕЛОК. ДОРОГО. Тел. 8-937-951-19-03. 11-16.**

* * *

**ĔНЕ, ВĂКĂР, ТЫНА ПĂРУСЕМ, СУРĂХСЕМ ТУЯНАТПĂР. Тел. 8-905-341-69-25. 10-10.**

* * *

**ЗАКУПАЮ КОРОВ, БЫЧКОВ. Тел. 8-965-688-01-77, Андрей. 11-15.**

* * *

**КУПЛЮ БЫЧКОВ от месяца до 600 кг. КОРОВ. ТЕЛОК. ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Дорого. Тел. 8-937-952-33-80. 1-5.**

* * *

**КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ от месяца на откорм. ДОРОГО. Тел. 8-937-391-23-33. 1-5.**

* * *

**ЗАКУПАЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК НА МЯСО. Тел. 8-961-345-77-89. 11-14.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ от 150 руб!!!**
**Тел. 8-909-300-33-66.** 1-97.

**Кивелнĕ ЭЛЕКТРОПРОВОДКА – пушар хăрушлăхĕ! Кил-çуртри электропроводкăна, счетчика улăштаратпăр.**
**Тел. 8-937-015-35-40.** 1-10.

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:031001:210, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Шамитов Николай Андреевич, проживающий по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, ул. Советская, дом 11.

Ермакова Валентина Ивановна, проживающая по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, ул Советская, дом 73.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский р-н, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:031001:210. Адрес (местоположение): Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, дом 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу:

1) 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина дом 41/5(ООО Аршин)

2) Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д.37.(филиал ФГБУ «ФКП Росреестр»).

3) Управление Росреестра по Чувашской Республике по адресу: Чувашская Республика – Чувашия, г. Чебоксары, ул. К. Маркса, дом 56.

**Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; шпунтованные доски, вагонку; цемент, кирпич. Доставка. Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52.** 8-20.

**20 цифр. кан. БЕСПЛАТНЫХ.**
**«ЧĂВАШ ЕН» на ТРИКОЛОР, ТЕЛЕКАРТА.**
**Установка, обмен, ремонт. 8-905-345-77-19.** 9-10.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Срубы на заказ. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 10-10.




**Внимание!**
**Открылся новый фирменный магазин «ШАЛЕЕВСКИЕ/ИШЛЕЙСКИЕ КОЛБАСА И РЫБА»**
**в с. Моргауши по ул. Ленина, 40, к.1, рядом с автовокзалом. ПРИЯТНО УДИВИМ ВАС РАЗНООБРАЗИЕМ КОЛБАС И РЫБ, а также НИЗКИМИ ЦЕНАМИ!!!** 10-10.

**Продается жилой дом в д. Адабай. В доме имеются все коммуникации. Ровное место. Земля 40 соток, плодоносящий сад. Тел. 8-927-997-71-42. 10-11.**

* * *

**СХПК ПЗ им. Е. Андреева реализует ячмень по оптовой цене за 8 руб/кг и ЭКД – 20 руб/кг с места. Возможна доставка. Тел. 8-937-012-58-80, 8-937-012-51-31, 8-937-012-13-34, 8-937-012-73-75. 3-12.**

**Все виды РЕМОНТА ОБУВИ**
г. Киров принимает
**25 января (суббота):**
**- в РДК с. Моргауши с 14.00 ч. до 16.00 ч.**
**- в ДК с. Б. Сундырь с 16.30 ч. до 17.00 ч.**
**Большой выбор подошв**
**Без предоплаты**
**Гарантия качества**
Тел. 8-953-685-08-44.

* * *

**Продаю ячмень, овес, ЭКД. Возможна доставка. Тел. 8-927-669-42-53. 2-4.**

* * *

**Продается сено в тюках (люцерна, костер), возможна доставка. Тел. 8-927-665-76-22, 8-927-840-72-45.**

* * *

**Февраль уйăхĕнче пĕрремĕш пăранламалли качака сутатăп. Тел. 8-961-338-54-39.**

* * *

**Продаю сено в тюках и рулонах, солому в рулонах. Тел. 8-927-665-88-82. 1-10.**

* * *

**Уйăх çурăри тына пăру сутатпăр. Тел. 8-927-840-61-97, 8-927-998-23-81.**

* * *

**Продаются бычки от 1 до 3 мес. Тел. 8-909-302-57-46.**

* * *

**Пĕрре пăруланă хĕрлĕ тĕслĕ ĕне тата 3 уйăхри хĕрлĕ тĕслĕ тына пăру сутатпăр. Хорнуй ялĕ. Тел. 8-927-864-42-96.**

* * *

**Продаю кирпичный дом с надворными постройками в д. Юськасы, имеется колодец, погреб, баня, земля 35 сот. Асфальт до дома. Тел. 8-987-129-46-25.**

* * *

**Продаю месячных бычков с выбором. Доставка. Тел. 8-903-359-79-62, 8-919-669-01-71.**

* * *

**Виçĕ уйăхри 2 тына пăру сутатпăр. Тел. 8-927-868-89-80.**

* * *

**Продаю сено в тюках. Тел. 8-927-866-88-82. 2-2.**

* * *

**Май уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатпăр. Тел. 8-937-395-23-66.**

**Прогноз погоды** **По данным сайта rp5.ru**

| | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Явления по- | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура | +1 | -1 | -1 | -3 | -2 | -4 | -5 | -7 | -8 | -8 | -6 | -7 | -2 | 0 | 0 | -2 |
| Ощущается | -5 | -8 | -7 | -9 | -8 | -10 | -10 | -13 | -14 | -14 | -12 | -15 | -8 | -6 | -6 | -9 |
| Давление | 726 | 726 | 727 | 727 | 727 | 730 | 733 | 737 | 739 | 741 | 740 | 737 | 731 | 730 | 732 | 734 |
| Ветер | 7 | 8 | 7 | 5 | 6 | 5 | 3 | 4 | 4 | 4 | 5 | 7 | 7 | 8 | 8 | 8 |

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ ĕç ветеранĕ, пенсионерка

**Наталия Ивановна**
**АРАПКИНА**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Коллектив ООО «Моргауши-Хлеб» выражает глубокое соболезнование охраннику Клементьеву Н.И. по поводу смерти отца

**КЛЕМЕНТЬЕВА**
**Ивана Клементьевича.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.
ЧР Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
Телефонсем: тĕп редактор – 62-1-36, бухгалтери – 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ – 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем – 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction_morgau@mail.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Р– реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: П2851.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ А.П. Белов.
Пичете панă 21.01.2020 ç.
Пичете памалли вăхăт:
графикпа – 16 сех. 20 мин.,
чăннипе – 16 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4479.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.